


— Итлӗр, камантӑ паратӑп! Пурте сайом йенне ҫаварӑнса тӑрӑр!

# Мана та çыр

Пуху. Йалĕçтăвком претçетаттĕлĕ çураки йепле иртерни çинђен токлат пĕтерет.

— Епĕр сĕлĕ акнă, урпа тошĕ, пăри…

— Йĕтĕн вăррисĕр хăвартăн?—кĕрлесе кайрĕçĕ хыçалтан, пуш урапа çырманалла хăйне хăй кайнă пек. икĕ шарак сасă.

— Митрахван, Митрахван, çыр хут, йĕтĕн вăрри çук те,—сасартăк аçа çапнă пек кăшкăрђĕ çыруçине претçетаттĕлĕ.

— Çĕрулми уйа лартасси манса йулнă,—кăшкăрђĕ тепри.

— Сан арăму киле манса йулмани!—тарăхнипе тăрăхласа тавăрђĕ претçетаттĕлĕ.

— Е-е, аçу кинĕпе пурнакан!—çапрĕ хирĕç.

— Епĕ-и? Епĕ-и? Тытрăни? Çыр, çекреттар, актă „оскорплени поветени“ те,—хĕрсе кайрĕ пушшех Танилле претçетатлĕ.

— Арăму тата кам кинĕ, ухмах!

— Ха-ха-ха! ахăрса кайрĕ пуху.

Пуху нумайђен тавлашађĕ пулĕ. Сасартăк пухха Ваçак Йаккавĕ кĕленђе ăшĕнђен тухса утăнса кайнă пек шаплатса кĕрсе ўкрĕ.

— Еă еп!—сывлăш çавăраймаст Йакку çăварне çăпата калăпĕ ђикнĕ пек.—Епĕ…

— Кала! Кала! Мĕн „еплетен“ пуç çавăрнан сурăх пек.

— Еп пилĕкçĕр тенкĕ! Мĕн епĕ пилĕкçĕр тенкĕ,—хашкаса йађĕ çĕмрĕк пăраххут тăрпи пек.

— Мĕн пилĕкçĕр тенкĕ? Çаратрĕçи?—сасартăк ыйтрĕ халăх.—Хăçан? Кам?

Халăх ку вăхăтра сасартăк тарăн шухăша кайрĕ. Хăшне пилĕкçĕр, тĕлĕк пек туйăнат. Хăшĕ картла выљђаса йанă пек шутлат, хăшĕ вилĕм умĕнђи пек „ах ђасрах калатăрђĕ“ тет.

— Еп выљђаса…

— А-а, картла выљљђаса йанă. Пыратха, ытла…

— Тĕсех сана! Кам хушрĕ выљђама? Картпа çын хăçан ыр курни пур, ухмах! Ађи-пăђи вак—вăл картла выљђаса çўрет. Тфу!—улма калакĕ пек сарлака ура лаппи çине лађ сурђĕ Тăтук инке.

— И-илтĕм!—кăшкăрса йађĕ Йакку.

Ку халăха татах тĕлĕнтерђĕ. Пурте харăс:

„Кам йађĕ? Тушши Макçăмĕ пуљ?—ыйтрĕç Йакку илнĕшĕн лайăх мар пек пулса.

— Пыратха Макçăма, ытла манпа ана çинђе хытă тавлашрĕ,—сăмах хушрĕ Хветут.

— Никам та йаман. Опликатсипе выљђаса илтĕм. Акă № пăхăр. Акă татах тухат, кăларма, ыйтаççĕ…

„Выљђаса илтĕм“ тенине илтсен халăх вилнĕ пек шăпланђĕ.

„Ах, çав опликатсине ма илмерĕмши?“—шутлаççĕ.—Тен вăл ман нумĕре тухађђĕ.

Лайăх пек те туйăнат, Йакку çине те тарăхас килет.

Çимелкке Ваççин куна илтсен ђĕркуççи шăмми хытса ларђĕ, лĕпке тĕлĕнђен çĕçĕпе ђикнĕ пек ыратса кайрĕ, ђĕре куђĕ йак-йак ђиксе илђĕ, пыр шăтăкне ђул катăкĕ ђиксе хирсе лартнă пек сывлăш тухми пулђĕ.

— Çтенкки! Ирттнинђе те есĕ мана улталаççĕ тесе илтермерĕн? Вĕлереп!—кăкăртан çавăрса тытрĕ сăнђăрланă пек.

— Стоп! Халăх! Суйат вăл! Çав ухмах Йакку хыççăн кайаттăри? Ăна йури тахăшĕ халăха улталама тара тытнă,—хыттăн пуçларĕ Тимак.

— Суйат! Тытăр! Иртнисем те ахалех, никам выљђаса илмен…

— Вернă! Кăларса çапăр ăна! хĕрсе кайрĕ Тим…

— Итлĕрха, итлĕр! Ара есĕр пĕри те тĕрĕслемен вĕт! Акă таплитсă пур, тавай тĕрĕслер.

— Тĕрĕслетĕр! Тĕрĕслетĕр.

— Митрахван! Сан пĕрне попал 50 тенкĕ! Ваç… санне 20 тенкĕ… Кайса илĕр перекет кассине.

— Суйат! Суйат! Халăх тытăр, пĕрре суйма… рентер!

Митрахван лаша утланса йара пађĕ виçĕ çух… ма перекет кассине.

Митрахван таврăнса килиђђенех Йакку тытса… несрен хăранипе йĕп тăрĕнђи пек ларђĕ.

— Вернă! Халăх, вернă! Парса йађĕç! Тата вы… љђаса илнисем пур. Каласа йар пурне те тĕрĕс… ме, терĕ лери,—хĕпĕртесе кайрĕ Митрахван.—Т… акă хаçат: „Рапођђисем çĕнĕ сайом кăларма ы… таççĕ“.

— Çырăнап!

— Епĕ те!

— Суйаççĕ, улталасшăн,—тăмалмаст Тимак.

— Ан паккаса тăр, Тимак. Пĕр кунĕнђе те е… çапла илĕртсе сайомсăр хăвартăн,—тарăхса кашк… ђĕ Крахвине кинеми.

— Вернă! Кăларса çапăр ăна! Милитсийе пар… тытса шуйттана!

— Епĕ мĕн, хамшăн-и мĕн? Мана Çтаппан кул… хушса йађĕ. Есĕр ăçтан уншăн мана тытма пул… раттăр,—каласа йађĕ. Тимак халăх хĕсĕрлесе çит… сен, Крахвине кинеми кăкăртан çăпата кантри п… кăвак тымарлă аллипе тытсан.

— Ха-ха-ха! Вон вăл мĕншĕн.

— Çырăнатпăр çĕнĕ сайома! Ĕçлекенсен шухă… пе епĕр те!

— Çыр! Çыр, Йакку, мана! Микитă Микколай… ђă 50 тенкĕ илђĕ, укçине полни тўллерĕ те,—к… мăллăн ăшă куçпе пăхкаласа, кăвак сухалне йак… са укçа кăларђĕ Митук.

— Мана та çыр! Укçине Йăванђă 20 тенкĕ т… На,—пĕрмеклĕ шупăр кăсийинђен пир хутаç турт… кăларђĕ Укçине.

— Мана та çыр…

— Ман та илес штољ.

— Еп те илеп. Шуйттан Тимакне пула иртнин… те ахалех пулђĕ.

— Çырăнас çĕнĕ сайома!—йантрарĕ харăс пух…

**Н. Ђурпай.**

## Ăс тупнă.

Пĕрл телефон стантси йенелле ђупса кай… Йулташĕ унтан ыйтат:

— Ăçта ђупан?

— Телефон стантсине.

— Ма?

— Хамăрăн пуçлăхпа телефон тăрăх калаç… тетĕп.

— Ăçта вăл? Урăх хулара кăмантировккăра… мĕн?

— Кăмантировккăра мар, кăпинетрах ларат. Т… миçе кун ĕнтĕ курса калаçасшăнђĕ… сайавле… çине ресољутси хурса панипе паманнине ыйтма… лађђĕ. Кашнинђех «кайран килха, халĕ вăхăт çук… тесе ăсатса йарат. Телефонпа ыйтсан ирĕкçĕр… ответ парĕха, тетĕп.

# кĕреçе айăпĕ пирки

Йулашки маневăрта пирĕн виççĕмĕш çвено паттăр вилĕмпе вилнĕ хисепе кĕҫĕ. Посретнĕк пурне те стройран тухса ӳкнĕ çынсем вырăнне хисеплемелле турĕ. Ун пирки окрăкри хаçатра та çырса пĕлтерҫĕç. Странитсипех пирĕн çинҫен çырса, ӳкерĕксĕм те кӳртсе хунă. Анҫах мана хам сăнлă тута ӳкереймен вара хутошнĕкĕ: пăхсан хам пекех те, анҫах сăмсана темĕскерле хăйар майлă туса лартнă. Ретактăрĕ патне шалăпăпа та карăм та, вăл хутошнĕк майлах касаť: сăмса, тет, вăл, нимех те мар, тен вăл вăхăтра санăн сăмсу ҫăнах та хăйар майлах пулнă пуҫ те, тесе ăсатса йаҫĕ.

А инкекĕ пулҫĕ пĕҫĕк йапала пиркийех—кĕреçе пирки. Кĕреçе пиркийех те мар та, сапиорла ĕçсем пирки теме те хураť.

Роттă опоронă тăваť. Пирĕн оттелениййе пĕр уçланка сыхлама хушнă. Уçланкă пит аван вырăнта: йĕри-тавра йешĕл курăк, тĕрлĕрен ҫеҫексем тирсе тухнă, тĕрлĕ ăратлă кайăк-кĕшĕксем йурлани ҫуна савăнтараť, çийелтен çурхи хĕвел пĕçертсе пăхаť.

Пирĕн вăхăтлăх оттеҹоннăй кăмантир (тепĕр майлă каласан—отелкком) пирĕн умра тăракан вăрçăллă сатаҫа пĕлтерет те, выртса пемешкĕн оккопсем алтма хушаť.

— Есĕр алтăр,—тет,—епĕ кăштах выртса канам, темĕскер вар ыратнă пек пулҫĕ,—тет.

Выртрĕ те, харлаттарма тытăнҫĕ. Çав тери хытă çывăрса кайнă—хытă çывăрнипе тути-çăварĕнҫен хăмпусем тухса тăраççĕ, сăмси тĕрлĕрен кĕвĕсем каласа шăхăраť. Кайăксем те вăл сасса илтнипе шикленерех вĕçме пуçларĕç...

Епĕ кимнаçťоркка хывса пăрахрăм та, Трекупăв Çемена (хам йулташа) кăшкăрса илтĕм:

— Кӳр, утарлă ăмăрту тăватпăр.

— Мĕн пирки?

— Кам лайăхрах оккоп кĕске вăхăтрах ҫавма пултарас пирки? Йурати?

— Йураť.

Тытăнтăмăр ҫавма. Арлансем пекех ҫаватпăр. Хашка-хашка ҫаватпăр, алтатпăр.

Ҫавсан-ҫавсан Трекупăв йулташ ҫупса пыҫĕ те кам мĕнҫул ҫавнине виçсе пăхас, терĕ. Виçсе пăхрăмăр та, манăн унăнҫен кĕреçе сарлакĕш тарăнрах тухнă. Кайа йулса пыраť мĕн ман йулташ, епĕ мала тухатăп.

— Тен, çитет пуҫ кун ҫул ăмăртнипе, пăрахăпăр, тет мĕскĕн.

Епĕ килĕшместĕп. Вĕçне çитиҫҫенех ăмăртар, тетĕп. Ман оккопĕ пит аван пулҫĕ,—вара çăл хăйех тĕпне шыв та тухма пуçланăҫҫĕ...

Татах алтаттăмăрҫĕ те-и тен те, анҫах отелкком хăратса пăрахрĕ:

— Сылтăм йенҫен тăшмансем килни курăнаť. Пăшал пеме тытăнăр, терĕ.

Епĕ вăрвар винтовкка йарса илтĕм те, хамăн оккопа тăрстин сиксе кĕрсе кайатăп. Оккоп аван тухнă манăн. Аван та, анҫах пĕр пĕҫĕк инкек пурах вара: вăл оккопран пăшал пеме нийепле те май çук. Перес тесе выртатăн та, пуçу пĕтĕмпех шăтăка анса кайаť, урусем çӳле йулаççĕ. Кулăшла. Пуçу нӳхрепре выртаť, темелле, урусем çӳлте, нӳхреп анинҫе. Кутăн тăнă çын пек.

— Мĕн туса хутăн!—тесе вăрçаť мана отелком.— Тăмран çăрса тунă ухмах! Оккоп алтнă ҫухне çĕрне хыçалалла пăрахса пыраççĕ-и вара, малалла пăрахма кирлĕ. Ы-ых, тăмсай!

Ҫăнах та вăл каланă пек тумалла пулнă мĕн.

Илетĕп кĕреçе, тытăнатăп оккопа йусама. Ах, май килмерĕ. „Тăшмансем" персе çитрĕç. Вара, ирĕксĕрех оккоп шăтăкĕ ăшне хамăн шинеле, противокаса, тата ытти хампа пĕрле пулнă йапаласене пăрахса выртма тиврĕ.

Трекупăвăн оккопĕ тата кулăшларах тухнă. Вăл тăприне варрине купаласа пынă та, оккопĕ икĕ шăтăклă пулнă. Унта кĕрсе выртсан пуçу айалалла анса кайаť, хырăму çӳлте тăрса йулаť, ик уру ик тунката пек çӳлелле кармашса тăраççĕ. Пĕр сăмахпа каласан, тăратса лартнă пĕкĕ пек пулса кайаť кĕлетку. Вăл оккопран пăшал пеме нийепле те май килмест.

Тăшман йенҫен пăшал сассисем илтĕнме пуçларĕç. Епĕр те хирĕç ответ паратпăр. Анҫах... епĕ пемехленетĕп те, ăçта тĕллемеллине пĕлместĕп. Курăнмасť. Ара, пуçу айалта, уру çӳлте... ăçтан тĕллеме пĕлĕн ĕнтĕ вăл полошенире.

Отелккомĕ пире вăрçаť! Ай, пĕçертет! Мĕн тăвăн ĕнтĕ—пирĕн оккопĕ çавăн пек пулнă та. Телейсĕр оккоп мари ара!

Ку истори вара çакăнта пĕтрĕ. Пирĕн çвенона пĕтĕмпех вилсе пĕтнĕ тесе шутламалла турĕç.

Вот пулаť истори, кăтартуллă истори: епĕр тунă йăнăшсем тăрăх ытгисем ун пек тума кирлĕ марри çинҫен вĕренсе пыраççĕ.

Лекрĕ вара пире уншăн. Лекмеллипех лекрĕ. Пуçлăхсенҫен те ленкрĕ, çтена хаçатĕнҫен те ленкрĕ, окрăкри хаçатран та лекрĕ. **В. Кваçнитски.**

## *ШАТРА ҪИРĔ—ПУÇА ÇИРĔ.*

Шатра ҫирĕ пуçланҫĕ çав çав районта.
Ҫирлеççĕ аҫасем унта та кунта.
— Вилеççĕ, теççĕ леш йалта.
Курасси, хамăр курман та!—
Пуплеççĕ арăмсем пĕр-пĕринпе
Кĕтӳ хĕрринҫе.
— Шатракасакан килмелле, теттеха йала.
Темĕн тумалла?
Те, кастармалла Ваҫука?
Те, хăвармалла ку срука?—
Йумахлаť кинемĕшпе Утатти.
— Кастарсан та темĕнле ça-a-ав!
Вилнĕ, тет вăн, Аҫукăн Варнав,—
Супĕлтетет ватсупнă кинемей
(Мĕн кĕтмелли пур вăл ҫунран телей?!).
Çав кунсенҫех çитрĕ шатракасакан,
Пуçтарҫĕ кашни килĕрен, кашни урамран.
Ăнлантарҫĕ шатра çинҫен тĕппипе
Пурне те.
Ваҫук амăшĕ хăрарĕ,
Кастармашкăн пымарĕ.
Шатра каснă аҫасем те ҫирлерĕç кашниех
Пурĕ пĕрех.
Анҫах иртерҫĕç çăмăллăн,
Амăшĕсем те йулҫĕç кăмăллăн.
Ваҫук амăшне лекрĕ макăрма,
Ĕмĕрлĕх куҫҫанма:
Вилҫĕ Ваҫук шатра ҫирĕпе шăматкун.
Шатра ăша кайнă ун.
— Хам пиркийех пĕтрĕ, шеремет аҫи!—
Уласа макăрҫĕ Ваҫук амăшĕ—Утатти.

**Ç. Шăпҫăк.**

# „ирĕксĕрех пулăшрăм“



**Кулак:**— Çылăха кĕтĕм, пађăшкă! Пĕрре, иккĕ... виç ерне çитрĕ ĕнтĕ çылăхне туни.
**Пуп:**—Мĕнле çылăх? Калаха апла.
**Кулак:**—Осоавиахим ретне тĕреклетме пулăшрăм.
**Пуп:**—Ухмаха йертĕни мĕн апла хăтланма.
**Кулак:**—Вăрçă пайан-ыранах пуçланат тесе сăмах сарса йатăм та, ăна илтсен Осоавиахим ђленĕсемпе колхоçнĕксем вăрçă ĕçне çине тăрсах вĕренме пуçларĕç.

---

## „Йăвăр тăпри çăмăл пултăр“.

Çак статйана вуласа пăхсан, хăшпĕрисем: кам вилнĕ, кама пытарса унăн пăмилккине иртернĕши?—тейĕç.

— Ђăнах та вилнĕ çав. Вăрнар районĕнђи турăсăрлăхсен ушкăнĕ вилнĕ (кăннă). Пытарни те темиçе уйăх çитет ĕнтĕ. Пипли çинђе: Моиçей пророка вилсен ăçта пытарнине никам та пĕлмест тесе пупсем тыттарнă пек, Вăрнарти турăсăрсем советне ăçта пытарнине те никам та пĕлмест. Те йумахри рай варĕнђи ырăпа-усала пĕлтерекен йывăççин çимĕçне çисе çылăха кĕнине Атампа Йевă смоква йывăççи çулçи айне пытаннă пек таçта Вăрнар ытла вăрманта ларнăран—вăрмана пытаннă, никам та ăçта пытаннине пĕлмест. Икĕ кун, çуртапа ширанă пек шырасан та, кун çуттинђех райсовета тупмалли пулмарĕ.

Хăйĕн те нимле ĕçĕ те çук.

Райсовет кăннă çĕрте тĕн сĕрĕмĕ вăйла тухнă.

Райсовет пиђĕпе сăн-сăпатне çухатса массă хушшинђен кĕтӳрен сурăх çухалнă пек çухалнă.

— Ей, райсовет, ăçта ĕнтĕ санăн вăйу, ăçта ĕнтĕ санăн хăвату!..

Кĕрӳ килсе кĕрсе алăкне хупнă пек, есĕ те хупăнтăни мĕн? Калаха тархасшăн?.. Вилнĕ ђухнехи йурра „ђунăм-ђунăм, сиксе тăр ђасрах, мĕншĕн çывратăн-ши. Санăн калаçмалла пулĕ“ тенĕ пек йурласмарши?..

Вилтĕн пулсан та хуть страшнăй сут пулнă ђух ђĕрĕлсе тăрăни?

Ђăвашсовет сан çинђен йаланах проçвиркă парса, есĕ тепĕр хут ђĕрĕлсе тăрассине кĕтет.

Ну сывă пул. Хăрăк йуман сухĕмĕнђе лайăх вырт!

Песпошник **А. Соловйов.**

## Ман пĕлесҫĕ: мĕншĕн-ши пурăнат̆ ҫак ҫын йышши?

Манпала
пĕр куппере—
те
ҙеҙук,
те
пуп хĕрĕ.
Те
пĕр
ҫектă пуҫлăхĕ,
те
кăшт...
пуркă пуҫлă хĕр.

Ростовран
йермешрĕ те
хаҙ те
хăлхана ҫĕртет.

Пултăр
стантсă,
хăт̆ расйес—
мăкăр-мăкăр-мăкăр
ҫеҫ.
Кунĕ-кунĕпе
вулат̆.
Лайăх,
тейĕр,
ку йăла.
Ну
конешнă
наҙар мар,
шухăш ҫук
ăна
ҙарма.
Анҙах
мĕн вулат̆?
мĕскер?—
Пипли,
ҫĕр ҫăтманăскер!

— Тĕне хирĕҫ теҫĕссем
шырат̆,—
тейĕр
есĕр тем.
Ахаҙ мар вĕт
йаш хĕрсем
турăсăрланаҫ хĕрсе.
Анҙах
ку хĕр
хĕрĕхре,
пиҙĕ-куҫĕ
пĕрĕкрех.

Ҫитменнине
ир те
каҫ
аллисем
хăлаҫланаҫ.
Апат ҫирĕ,
ҙей ĕҫрĕ—
виҫĕ пўрне
пĕр ҫĕре.
Анасларĕ,
карăнҙĕ—
«туррăм,
тет,
каҫар ĕнтĕ...»
—
. . . . . . . . . . . . . . . .

Пĕрре мар,
тăваттă мар,
вунтăваттă
картрăмăр.
Тата:
вунă
ҫултан та
Ҫак
ларĕши
вакунта?..

Пултăр
стантсă,
хăт̆ расйес—
мăкăр-мăкăр-мăкăр
ҫеҫ.
Ҫилентерҙĕ тĕр мана
ҫав
săваплă тăмана.—

Шухăшларăм:
хăш йенҙен
усă пурха
кусенҙен.

. . . . . . . . . . . . . . . .

Ман
пĕлесҙĕ:
мĕншĕнши
пурăнат̆
ҫак ҫын йышши?

**П. Хусанкай.**

---

## Автотор йаҙейкки!

Ҙăваш респуплĕкĕнҙе ҫулсăрлăхпа кĕрешмелли уйăх пĕтĕмпе илсен аван иртрĕ. Автотор йаҙейккисен ҫулсăрлăхпа малалла та хастарлăн кĕрешсе пымалла.




Кун пекки пуласран сыхлансах тăр!

# Çăраççи



(Стсенккă*)

**Халăх сутйи.** Çырмапуç йалĕнђи Хăмпуç Ваçлийĕ есĕ пулатăни?

**Ваçли.** Епĕ.

**Сутйе.** Сана акă мĕншĕн айăпласçĕ. Майăн 3-мĕш кунĕнђе есĕ колхос трактăрĕн винттăллă çăраççине (çăра уççине) вăрласа киле илсе кайнă. Çăраççи çук пирки трактăрăн икĕ кун, ђи хĕрсе суха тумалли вăхăтрах, ахаљ лармалла пулнă. Çăраççи кайран сан патăнта тупăннă. Есĕ ăна сехет тукмакки вырăнне çакса йанă пулнă. Тĕрĕси епĕ калани.

**Ваçли.** Мĕн?

**Сутйе.** Санран ыйтатăп: тĕрĕси проттокколра калани, тетĕп.

**Ваçли.** Тĕрĕс пуљ.

**Сутйе.** Апла пулсан калаха: мĕн шухăшпа илсе каймалла пулнăха санăн çав çăраççийе?

**Ваçли.** Кирлĕрен илнĕ пуљ. Кирлĕ мар йапалана кам илет ĕнтĕ.

**Сутйе.** Сехет тукмакки вырăнне çакса йарасшăнах илсе карăни вара?

**Ваçли.** Мĕне?

**Сутйе.** Çăраççине.

**Ваçли.** Хăшне?

**Сутйе.** Каларăмиçха — трактăрăнне. Трактăрăн франтсуски текен çăраççи пур. Çавна.

**Ваçли** Тимĕртен тунинеи?

**Сутйе.** Тимĕртен тунине çав.

**Ваçли.** Муклашкаллине-и?

**Сутйе.** Тфу! Мĕн ытлашши каласса тăратăнха. Кала тӳрех: сехет тукмакки вырăнне çакса йамашкăнах çаклатса карăни вара паха трактăрăн паха çăраççине?

**Ваçли.** Унта çакмасан ăçта çакасха. Мăйа çакмалли йапала мар вĕт вăл.

**Сутйе.** Апла çавăншăнах илтĕн пулаť?

**Ваçли.** Илесси мĕнĕ... Мур илешшĕ ађисем, сехет тукмаккине выђама тесе таçта илсе кайнă та, çухатнă. Хăвах пĕлетĕн ĕнтĕ—тукмаксăр сехет çӳреймест. Вара çавна илсе пырса çакса йамалла пулђĕ.

**Сутйе.** Ăна çакнă хыççăн сехеђĕ çӳреме пуçлари вари?

**Ваçли.** Çӳреймерĕ çав. Çăмахне силлесе йанă хыççăн, пĕр иккĕ-виççĕ шаккаса илкелет те, каллех ђарăнса ларать. Трактăр çăраççи... Çăмăлтарах йапала çав вăл. Унта йурăхлă мар. Кирпĕђ çакса йамалла пулнă.

**Сутйе.** Есĕ колхос ђленĕнђе тăратăниха çак?

**Ваçли.** Епĕ-и?

**Сутйе.** Есĕ çав.

**Ваçли.** Çултаăк çитет ĕнтĕ унта кĕни.

**Сутйе.** Колхосра тăратăн пулсан, ма колхоса си- йен тăвас терĕнха? Вĕт сан пирки трактăр ик- кун ĕçлемесĕр ларнă. Çăраççине илсе кайнипе ес- колхоса та, хăвна та сийен тунă.

**Ваçли.** Кирлĕ мара калатăн. Кулак штођ еп- колхоса сийен тума. Тăн пуç пур вĕт пирĕн. Епĕр виçĕ тăван колхосра тăратпăр: епĕ, Мĕкĕте, тат- Йăван,

**Сутйе.** Неушлĕ пĕлместĕн вăл çăраççи трактăр- пăсса йусанá ђухне пит кирлине. Кайккăна çар- алпах пăрса лартмалла мар, çăраççи кирлĕ.

**Ваçли.** Вăл сире мĕн тума кирлине ăçтан пĕлм- пултарапха епĕ. Трактăрис вăл çăраççипе темĕскер аппаланнине курнăђђĕ те, мĕнне пĕлмерĕм.

**Сутйе.** Суйатăн! Трактăрис унпа темĕскер ĕçле- нине курнă пулсассăн, пĕлетĕнех ĕнтĕ вăл çăраçç- трактăр ваљљи кирлине. Ыйтмасăр илмелле марђђĕ. Çийĕнђен тата вăл колхосăн. Вăл çăраççийе ес- çаклатса кайнă пирки, уй ĕçĕ ђарăнса тăнă. У- пек çăраççи!..

**Ваçли.** Ай, ун пек çăраççисем претçетаттĕлĕ- çтена çумĕнђе пĕр çирĕм те пулĕ çакăнса тăраçç-

**Сутйе.** Вĕсем çăра (самок) ваљљи тунăскерсем, ку—кайккăн.

**Ваçли.** Çавах мари вăл! Çăраççи тăк вăл çăраçç-

**Сутйе.** Калăпăр, сехет çумне санăн тукмак çакс- йамаллађђĕ, кирпĕђ, йе ђул татăкĕ, а есĕ..

**Ваçли.** Ей, калаçатăн çак! Тукмак! Тукмак çĕрт- выртса çӳреместçкеха вăл. Ăна укçа парса илме- ле. Кирпĕђи... Хм... Пурђђĕ те пĕр кирпĕђĕ, кăма- ка тĕпне йусанă çĕре кĕртсе йамалла пулђĕ. Ђу- йурамаст. Çыххи салтăнса кайсан, ӳкме пултара- Пуç çине ӳксен пуçа шăтарса пăрахма пултара- Шăтăк пуçпа çӳреха вара.

**Сутйе.** Çăраççи илсе кайнипе колхоса сăтăр ту- нăçкеха есĕ.

**Ваçли.** Колхоса сийен кӳме... усал çын терĕни- мана. Ха! Каларĕ. Епĕ пĕтĕм трактăрне вăрлас- кайнă пулсан, калама пулĕђђĕ. Пĕр пĕђĕк йапали- не анђах илсе карăмçке. „Сăтăр тунă" тет. Çакн- каламашкăн мĕнле ђĕлхӳ çавăрăнђĕ санăн. Неуш- лĕ епĕ ун пек çын. Куншăн сана сута пама т- пултаратăп. Калинин патне шалăпăпа кайам. „Сă- тăрçă". Хе! Ах, пӳрократ! Хм! Çăраççишĕн... Ти- мĕр татăкĕшĕн... Тфу...

**Сутйе.** Вăл тимĕр татăкĕ санăн марçке, колхосăн.

**Ваçли.** Епĕ камăн тата? Колхосăн мари? Хамă- колхосра хамăр хуçа мари?

**Сутйе.** Хăвăр хуçине пĕлетĕн пулсассăн, мах- колхоса сăтăр турăн?

---

*) Ђеххăван калавне урăхлатса тунă.

## ...унӑн ҫирӗ

...Кунсем ҫилтӑвӑл пек хӑвӑрт иртеҫҫӗ. Ӑмӑртупа ...тарниҫҫӗства йӗркине хӑт мӗнле пулсан та пӑхӑ...аҫҫех вӗсем.

Ҫапла поҫшевикла ҫураки те иртсе карӗ.

* * *

— Ех, хаҫ ӗҫрен пушантӑмха. Ҫуракине ӑсатса ...атӑмӑр. Ӗнтӗ тинех кан... Куҫай!—савӑнса кӑш...ӑрҫӗ хайтӗллӗн Кӗҫтенкки ҫемҫе вырӑн ҫинҫе ...аша йӑваланнӑ пек йӑваланса. Унтан вӑл пӑравус ...ек хашлаттарса ҫывӑрса карӗ.

Хӗвел ҫаранма пӗлмесӗр кулат. Хитре хӗр тути ...евӗрлех кулат ун тути. Вӑл хайӗн йӗплӗ те пӗ...ергекен пайӑркисене пӗр хӗрхенмесӗр ҫӗр ҫине ...акса йанӑ, сапаланӑ. Унпа вӑл тӗнҫене сават. Ҫы...ӑракан ҫынсене вӑратас шутпа пулӗ, хайӗн йӗп...исене ҫӳреҫесенҫен кӳртсе йарса питсенҫен, пуҫ...ан тире-тире илет.

— Тӑрӑр, тӑрӑр, ма нумай ҫывӑратӑр? Тырпул ...уҫтарса кӗме хатӗрленес пулат вӗт, тесе ҫухӑр...ах каласшӑн вӑл. Анҫах мӗскер тӑвас... сасси тух...аст ун. Шел. Питӗ шел.

Кӗҫтенкки хӗвел йӗпленине тӳсеймерӗ. Утийа...ӗпе шӑнса хытма пуҫланӑ ҫын пек, пӗркенсе ...ыртса вилме выртнӑ сысна пек аран-аран маш...атса вырттат.

— Кӗҫтенкки, ара... тӑр! Кӑнтӑрла та ҫитрӗ па...ан. Каплах ҫывӑрсан йал кулма пуҫлӗ, тесе йӑ...ашшӑн вӑратрӗ Кӗҫтенккине арӑмӗ.

— Ей, лӑркаса тӑрат тата. Хаҫ ӗҫ пур штоҫ?—...атах пӗркенсе выртрӗ Кӗҫтенкки.

— Ҫӗр-и-ик... ҫӗриклетрӗ хапха. Йолт сиксе ...ӑҫӗ вырӑн ҫинҫен Кӗҫтенкки.

— Такам мурӗ ҫӳрет тата. Канлӗн ҫывӑрма та ...амаҫҫӗ, тесе ҫортлата ҫортлатах кӑмака ҫине хӑ...арса пытанҫӗ.

* * *

Ыран-пайанах тырӑ вырма тухмалла. Ырашсем ...уҫӗсене тайсах хайсене выракансене ҫунганах ...ӗтеҫҫӗ.

— Ех, ҫертти, хӑвартрах ӗҫлӗр, хӑвӑртрах... ...Утарлӑ!—ҫӑварне виҫӗ шит карса пӑрахсах ҫухӑ...рат колхос претҫетаттӗл Кӗҫтенкки. Тырпул пуҫта...ракан машшинсене йусакансене васкатат вӑл.

Упа пек ӗҫлеҫҫӗ ремонт тӑвакансем! Ҫырмари шыв пек йухат вӗсем ҫинҫен тар. Утарлӑ йусаҫ машшинсене—ыран тыр вырма тухмалла!

Кӗҫтенкки ҫавра ҫил пек вӗҫтерҫӗ Йӑван муҫи колхоҫнӗк патне.

— Колхоҫнӗксен пуххи тӑвас, терӗ вӑл. Хӑвалама хушрӗ пухува.

— Сторовӑ, алӑ пырса тытрӗ районтан килнӗ прикатир Кӗҫтенккине.

— Ну, мӗнле, тырӑ вырма тухатри?—тӗпҫеме пуҫларӗ прикатир.

— Курмасни мӗн ремонт пынине,—кунӗпе ҫупса тарӑхнӑ сассипе ответлерӗ Кӗҫтенкки.

— Пухура калаҫӑпӑр сан ҫинҫен, ун ҫух ответ тытӑн...

* * *

Пуху. Хӗрсе кайсах калаҫаҫҫӗ колхоҫнӗксем.

— Тырӑ вырма пайанах тухмалла. Пирӗн прикатӑсем те ҫук вӗтха. Кӗҫтенккине, ку тарана ҫитсе те пуху туса тырпул пуҫтарса кӗртес ыйтӑва лартманшӑн хӗртмеллех.

— Айта, пӗрре пуху туса ҫак ыйтӑва сӳтсе йавас, тесе тахҫанах каланӑ еп ӑна. Ӗлкӗрӗпӗрх-а-а, тет, вӑт, „ӗлкӗрӗпӗр" хаҫ,—тесе хӗрӳллӗн калаҫат пӗр сухал.

— Ун вырӑнне урӑх ҫынна ӗҫлеме йуратакан утарнӗке суйлас!

— Суйлас!

— Суйлас!—кӗрлерӗ пуху!

Кӗҫтенкки пуҫне, ҫул ҫакнӑ ҫын пек уснӑ. Куҫӗсем ун сапаланса пӑхаҫҫӗ.

— Ех, шуйттан кунӗсем, мӗнле пит хӑвӑрт иртрӗҫха вӗсем?—тесе нумайҫен шухӑщларӗ вӑл. Унтан пуҫне уссах килнелле тухса утрӗ.

Шан-н! пырса ҫапӑнҫӗ урамри пӗр пӗҫен пура ҫумне Кӗҫтенкки. Вӗлтлетсе ҫӑлтӑрсем выҫарӗҫ куҫӗнҫе.

— Ха... Кӗҫтенккине мӗн пулҫе вара. Ҫирлемерӗ пуҫ те?..

— Ҫирлерӗ пуҫ ҫав...

— Мӗнле ҫирпеши?

— Ыйӑх ҫирӗпе...

— Ха-ха ха!.. кулкаласа иртсе карӗҫ колхоҫнӗксем.

Колхос претҫетаттӗлне утарнӗке суйланӑ хыҫҫӑн, прикатӑсем уйӑрсан тин ӗҫ вырӑнтан тапранса карӗ.

— Текех кун пек ҫитменлӗх тумӑпӑр, теҫҫӗ колхоҫнӗксем.

**Туртуш Вени.**

---

**Ваҫли.** Ех, апла калатӑн пулсассӑн, пӗлместӗн ...есӗ пирӗн колхос пурнӑҫне. Хуҫа хамӑр, ҫавӑнпа ...илетпӗр. Хуҫа мар пулсан...

**Сутйе.** Апла есӗ колхоса сийен тунӑ айапа ху ...ҫине йышӑнатӑн?

**Ваҫли.** Епӗ-и?

**Сутйе.** Сӑтӑрлӑ, вӑрланӑ ӗҫ пулнине йышӑнатӑн?

**Ваҫли.** Илессе илнӗ те епӗ, анҫах вӑрлас тесе ...мар.

**Сутйе.** Йурат! Ларах ӗнтӗ.

**Ваҫли.** Манӑн киле каймалла. Йысна хӑнана кил...ме пулнӑҫҫӗ. Килҫӗ пуҫ.

**Сутйе.** Ай, ҫук, кайаймастӑн. Сана ернелӗхе тӗр...мене кайса хупӗҫ те, ҫавӑнпа пӗрлех колхосран та ...каларӗҫ.

**Ваҫли.** Мӗн?

**Сутйе.** Ернелӗхе тӗрмене хупӗҫ тетӗп, тата...

**Ваҫли.** Ай, тур ҫырлахах! Мӗнле апла? Тӑхтаха, тӑхтаха. Есӗ йанӑшса карӑн пуҫ. Епӗр виҫҫӗн пӗр тӑван. Йӑван, снаҫҫӑт, Мӗкӗте... Мӗкӗте ҫанах та претҫетаттӗлӗн ҫӳреҫисене ҫулпа персе ватнӑҫҫӗ. Ӳсӗр пулнӑ та... Ҫеппараттӑр ӑшне тислӗк йарса хӑварнӑҫҫӗ. Ӑна...

**Сутйе.** Вӗсене те тытӗҫха. Халӗ лар та ӗҫлеме ан ҫӑрмантар.

**Ваҫли.** Вот тепе на! Мӗкӗте ашкӑнса ҫӳрет те, уншӑн ман ответ тытас пулат. Сутйе пулҫей вӑл. Ӗлӗк стӑршина ҫухне аванрахҫӗ. Ҫутӑлтӑрса йараҫҫӗ те пӗрре пит-куҫран, иртсе те кайаҫҫӗ.

**Сутйе.** Ан ҫӑрмантарса тӑр тетӗп. Ей, ҫак ҫынна илсе тухӑрха.

**Ваҫли.** Хм! Сут туни пулҫи ӗнтӗ ку. Тимӗр татӑкӗшӗн... Хм! Сӑтӑрҫӑ теҫҫӗ. Колхос ӗнин хӳрине татса илнӗ пулсассӑн, калама йурӗҫҫӗ. Ех, пӳрократсем! Ха! Тфу!

**П. Кутйӗн.**

# астӑвас пулат̆ пурин те: йапӑх копператси ҫук














**1-мӗш карттин.**

— Ҫак ҫын мӗн ҫинђен шухӑшлат̆?

— Вӑл нимӗн ҫинђен те шухӑшламаст̆.

— Мӗншӗнха вӑл нимӗн ҫинђен те шухӑшламаст̆?

— Мӗншӗн тесен вӑл копператтиври пӳрократ,—пуҫ мими вырӑнне хутсем ҫине щанат̆.

**2-мӗш карттин.**

— Ҫак ҫын мӗн ӗҫлесе тӑрӑнса пурӑнат̆?

— Ӗлӗк усламҫӑ пулнӑскер вӑл. Халӗ ухутниксемпе ухутана ҫӳрет.

— Мӗншӗн ухутниксем ӑна ухутана илсе кайаҫҫӗ?

— Мӗншӗн тесен вӑл тир сӳме ӑста—„пӗр кайӑкранах 3-шер хут тир сӳсе илме“ пултарат̆.

**3-мӗш карттин.**

— Кам ҫак ҫын?

— Лавӑђнай комиҫҫи ђленӗ Пит паха ҫын.

— Вӑл пахи ӑҫт н паллӑ?

— Пахаран ӗнтӗ ӑна пайшђӗксем шыраҫҫӗ—ниҫта та тупаймаҫҫӗ.

**4-мӗш карттин.**

— Ку кам?

— Пирӗн копператтиври тивисткӑ.

— Мӗнтен паллӑ унӑн нӑҫӗ (хастарлӑхӗ)?

— Копператтив ђленӗсем хи вӑхӑтӗнђе активлӑн (хастарлӑн) кӗпе ҫума кайат̆.

# Ђир-ђĕрĕ мĕн пурри те-йапăх копператтăрсем




**-мĕш карттин.**

— Кам ку?

— Пирĕн копператтив лавкин прикашђĕкĕ. Çенĕ йапаламсем шухăшласа кăларнăскĕр. Копреттаттĕл.

— Мĕнле йапала шухăшласа кăларнă халиђђен вăл?

— Çур минутђа тумалли ĕçе пĕр сехет тумалли майсем тупнă.

**6-мĕш карттин.**

— Копператсине çывăх тăракан çак краштанин пуринђен ытларах мĕне йуратарах парат?

Тавар пахалăхне лайăхлатма-и, ĕççыннисене кирлĕ таварсем тăратма-и, йе пĕрле апатланас ĕçе йĕркелесе йама?

— Ес каланисенђен пуринђен ытларах вăл... купăста кукли йуратарах парат.

**7-мĕш карттин.**

— Мĕншĕн çак копператтăр колхоспа совхос йенелле питпе çавăрăнса тăрайман?

— Мĕншĕн тесен унăн пиђĕ шыçса кайнă (флюс). Шыçса кайнă питпе колхос йенелле çавăрăнма май çук, тет.

**8-мĕш карттин.**

— Пирĕн копператтива мĕн пуринђен ытларах кирлĕ?

— Лайăх шăпăр кирлĕ... йурăхсăрсене, йухăнђăксене, çитменлĕхсене шăлса кăлармашкăн.

# тапак

Тапак тенĕ йапала халҫхи вăхăтра—çитмен таварсенҫен пĕри пулса тăрат. Çавăнпа та виçеллĕ парса пыраççĕ тапакне те. Тапак вăл пур çынна та лекмест, илейменнисем пăшăрханаççĕ,—памаççĕ, теççĕ. Патшалăх çавăнпа та тапак „тавлашăвне“ пĕтерес тесе ăна ытларах лартса тума тытăнҫĕ. Тапак акма кашни колхоса, йала контроллĕ ҫыхвăрсем паҫĕ. Йеçли çав ҫыхвăрсене акса хăварсан, пирĕн килес çул тапак та çителĕклех пулĕ тесе ĕмĕтленетпĕр.

Çакнашкал контроллĕ ҫыхвăра Хĕрлĕҫутайри райплан Анат-Кăмашари „1-мĕш май“ колхоса пĕр теçеттин парат. Ҫăнах та кăна акса хăвармаллах ĕнтĕ. Колхос та куншăн хĕпĕртерĕ. Анҫах пĕр хуйхă—тапак вăрри çук. Ĕç çакăншăн тытăнса тăрат. Колхос пуçлăхĕ çак ĕç пирки Хĕрлĕҫутайри копсойуса, райколхоссойуса, тата ытти çĕре те çитет.

— Сирĕн тапак вăрри пури,—ыйтат колхос пуçлăхĕ.

— Ах, çук çав!

— Сирĕн те тапак вăрри çук пулĕ çав!

— Çук çав, илсе килмен.

Колхос пуçлăхĕ миçе çĕре çитмерĕ пулĕ, пур çĕрте те „çук“, „çук“ тенĕ сăмах анҫах илтĕнет. Ĕç тухмарĕ. Таврăнҫĕ вара килелле. Таврăнасси таврăнҫĕ таха, ĕçе унпах пĕтерсе лартма йурамаст (тепĕр оппортунисĕ пулсан пĕтерсĕ лартат), ыранах тапак вăррине акса хăвармалла, атту вăхăт иртсе кайат. Вăрлăх çукки тарăхтаратха.

Авă пĕр карҫăк тĕрлĕрен пахҫа вăррисем сутса çўрет.

— Ей, кинемей, санăн тапак вăрри пури?

— Пулмасăр! Пур, пур!

— Мĕн ҫул?

— Кашăкĕ пĕр тенкĕ.

— Ах, ытла хаклă çав.

— Ирĕксĕр мар,—карҫăк хăйаккăнах кайса ўкрĕ.

Ним те тумалли çук, илес пулат хаклă хакпах. Райкопсойус çине шанса пулмĕ. Унсăрăн план тулаймаст. Çапла вара карҫăкран вăрă илсен, колхос çав кунах панта çине акса хуҫĕ.

Майăн 24-мĕш ҫисли çитрĕ.

Колхосăн панта çинҫи тапак йаштах шăтса тухрĕ. Пур колхос халăхĕ савăнҫĕ.

Хĕвел хĕртмеллипех хĕртет. Пур çĕршыв, таврари вăрман симĕс тумпа йешĕрет.

Колхос халăхĕ панта çинҫи тапака 1 кектар çĕр çине куçарса лартат.

Çапла тапак лартнă çĕре пĕр çын поссылккă йатса пырса, колхос претçетаттĕлне тыттарҫĕ. Унпа пĕрлех пĕр тăваткал хутне те паҫĕ. Колхос пуçлăхĕ хутне малтанах илсе вуларĕ. Ак çапла çырнă:

*„Председателю Н.-Кумашенского колхоза.*

*Согласно райплан на вас возлагается производить загладку табачной разгладку в парнике под личной ответственности претçетателя в кратчаащий срок произвести. После рассадкойже будете обеспечивать ближайшие селение.*

*Старший агроном РКС Т. Кудряшов“.*

Колхос пуçлăхĕ çакна вуласан питĕ хăраса тĕлĕнсе тăҫĕ! Унтан хутаçне усрĕ. Кунта тапак вăрри, 5 кĕрепенке пулĕ. Çакна курсанах колхос пуçлăхĕ йăл кулса йаҫĕ.

— Мĕн хыпар тата?—ыйтрĕ пĕр колхоçнĕкĕ пырса.

— Йеçли епĕ малтанах карҫăкран тапак вăрри илсе акман пулсан, райкопсойус çине шаннă пулсан, епĕ ответ тытаттăмҫĕ,—терĕ.

Капла каласан леш колхоçнĕк те хутне тытса вуларĕ.

— Ей, терĕ вуласан, ман хамăн старши акронома Кутрашов вырăнне кĕрес пулĕ, терĕ.

— Çук,—терĕ колхос пуçлăхĕ, — есĕ ун вырăнне ан кĕр, вара Кутрашов ахалрен шалу çисе пурăнаймаст ес кĕрсен. Халиҫҫен вăл пирĕн пата килсе те пĕр токлат та туса паман, терĕ колхос пуçлăхĕ. Вăл каллех тапакне лартма тытăнҫĕ. Колхоçнĕксем пурте ĕçре.

Акроном Кутрашов колхоса пыма хăраса поссылккине çынран парса йанă. Хăй Кăмаша улăхĕнҫе кайăк кăвакалĕсене персе çўрет. **М. Фетăрăв.**

---

## Исвĕç хуйхи.

Çурхи ăшă кун. Ҫăкăт пек шурă йур кулакан хĕвел ăшшинҫен вăтанса ирĕлет. Шывланма пуçланă çул тăрăх исвĕç тийенĕ çунасене лашасем пĕтĕм вăйĕпе туртаççĕ. Исвĕç муклашкисем, хăйсене çĕре çемçетме илсе кайнине кура, хĕпĕртесе анҫах пыраççĕ.

— Çĕре çемçетме илсе кайаççĕ вĕт пире,—тет пĕр мăклашки тепĕрне.

— Хресҫенсенҫен ыр йат илтетпĕр. Тырри аван пулсан, тав тăваççĕ пире,—тет тепĕри.

——

Йала илсе пырса, исвĕçе путка алкумне тăкрĕç.

— Шыв та кĕрĕ кунта!

— Тавай типĕрех вырăн!—тесе те çухăркаларĕç исвĕç мăклашкисем.

Анҫах вĕсен сассине никам та илтекен пулмарĕ.

Тепĕр 2-3 кунтанах шыв йухма пуçларĕ. Путка алкумне шыв кĕрсе исвĕçе йĕпетрĕ.

— Ăй-й! Çăлăрах! Шыв! Йĕпенетпĕр! - çухрат исвĕç, анҫах сассине илтекен çук. Пырса та пăхмаççĕ.

— Акрономĕсем темшĕн килсе те ăнлантармаççĕ. Тен хресҫенĕсем типĕ çĕре куçарĕç. Халҫ пĕтетпĕр ĕнтĕ. Никама пĕр усă кăтартаймасăрах пĕтетпĕр!

Шыв та йухса пĕтрĕ. Исвĕç йĕп-йĕпех. Тăрринҫе анҫах пăртакçă йĕпенмесĕр йулнă. Ăна 4-5 çын пырса илсе кайрĕç. Йулашки выртса йулҫĕ. Ун çине çавăрăнса та пăхмаççĕ. Хытса ларҫĕ исвĕç Макăрат.

——

Пĕрре путка алкумĕнҫе пуху пулҫĕ. Исвĕç путка умĕнҫи шырлана тултарма йышăнҫĕç. Кĕресем илсе тухрĕç. Шырлана тултарҫĕç. Çийелле тăпра витрĕç. Халсăрланнă исвĕç пайан та çавăнтах, Шĕнер путки умĕнҫи шырланта (Çĕрпӳ р. хуйхăрса выртат.

— Акрономсем килсе ăнлантармарĕç. Ăнлантармарĕç. Ăнлантарнă пулсан хресҫенсем типĕ çĕрте усрăҫҫĕç. Халĕ вырт кунта. Никама усă парайманăмăр.

Исвĕç хуйхăрнине итлекен **В—й.**

# ирӗккӗн ӗмӗтленме ирӗк памаҫҫӗ

Аксу районӗнђи Сӗнђел йалсовет ђленӗсем майӑн 5-мӗшђен, РӖК-ран прикатӑ килиђђен, пӗр патшалӑх тӳлевӗсене те тӳлесе татман.

(„Пурӑнӑҫ хӗлхемӗ“ йатлӑ ҫтенхаҫатран).

Сӗнђел йалсовет ђленӗсем (Аксу р-нӗ, Тутар респл.) харкам хӑй ӑшӗнђе, ҫемҫе ђӗрисенђе, тӗрлӗрен тӗрлӗ ӗмӗтсем усраҫҫӗ. «Хӗрӳллӗ кађђӑ»—претҫетаттӗл Ҫтеппанӑв, вунҫиђ ҫулхи кађђӑ мар, пӗр-иккӗ авланса курнӑ ҫын, хӗр кӑтрипе, йе пӗрене ҫинђе хӗрпе ђӗвӗлтетсе ларнипе кӑмӑлне тӑрантараймасть. Ӗмӗтсем унӑн ҫӗкленеҫҫӗ ҫӳле. Мӑшӑрлану ӗмӗђӗпе пӳлӗннӗ Ҫтеппанӑв, паллах, амур ҫунађӗсемпе вӗҫет; куҫ умӗнђе сатанисем унта 25-мӗш ђислана тултармалли плансем, ҫав вӑхӑтрах айван ђӗре 25-мӗш ђислана авланас плана ӗлкӗртейменнине систерет. Пӗр-пӗр справккӑ ҫине алӑ пуснӑ ђухне ҫӳхе туталлӑ хӗрпе САКС кӗнеки ҫине васкаса алӑ пусасси аса килет. Мӗн тӑвассу пур? Совет влаҫӗ утӑмӗсем—темшӗн Ҫтеппанӑв ђӗри тапписемпе килӗшсе пымаҫҫӗ. 3000 тенкӗ халӑх ҫинђи парӑма виҫӗ кун хушшинђе пуҫтарса пӗтермелли йӑла сиксе тухнӑ. Савнӑ хӗре утарлӑ ӳкӗтленӗ тапхӑрта—РӖК-ран утарлӑ прикатӑ ђавтарса килет. Ҫапла пӗђӗк етем ӗмӗђӗсем пысӑк ӗҫсем айне пулса лапђӑнса ҫӳхелеҫҫӗ. Йеплле ђӑтас?

Йахлађкин (йалсовет ҫекретарӗ) ӗмӗђӗсем тӗрлӗ арӑм шухӑшӗсемпе ђарӑнмаҫҫӗ, тата ҫӳлерех ҫӗкленеҫҫӗ. Тӳррипех каласан вӑл мӗн пур ҫӗр ҫинђи ӗҫсене (тӳлевсене тӳлессине те) хӑварса пӗлӗт ҫинђи ӗҫсем ҫинђен пӑшӑрханать, тӗрлӗ „ҫылӑхлӑ“ ӗмӗтсене пӑрахса... антихрис килессе ӗмӗтленет. Антихрис миҫе мӑйракаллӑ пуласси те вӑл тӗплӗнех пӗлет.

Йалсовет ђленӗсен (претҫетаттӗлпе ҫекреттарсӑр пуҫне) ӗмӗђӗсем тата ҫӳлерех ҫӗклен нӗ, ҫавӑн-па тата хӑрушӑрах. Ҫӳлтипе аташакан ҫекреттарӗ колхоҫнӗксене айакри тамӑк сӗнет пулсан, йалсовет ђленӗсем вӗсен вађђи ҫӗр ҫинђех тамӑк хатӗрлеҫҫӗ.

Есир, айвансем, колхос тӑвас ӗҫе комуниссем пуҫланӑ тесе шутлатӑр пулӗ, ађапђалла ан ӗненӗр, колхоса ӑна ӗлӗкхи улпутсем тӑвасшӑн тӑрӑшаҫҫӗ, тесе хӑратаҫҫӗ тӗттӗм карђӑксене.

Ҫакӑн пек кӑшт кайарах йулнӑ ӗметсемпе тӑранса пурӑнаҫҫӗ, тӗрӗсрех каласан, пурӑнаҫҫӗ ку вӑхӑтђен вӗсем. Вӗсем кӗтнӗ ахӑрсамана прикатӑ йеверлӗ пулса килђӗ. Ирӗксӗрех, вӗсен ӗмӗђӗсене татса, парӑмсене пуҫтарассине астутарђӗ, тата—колхосшӑни, йе хирӗҫи? тесе умӗсене ыйту лартрӗ.

Халӗ ӗнтӗ йуратнӑ ӗмӗте татса ҫавӑн ҫинђен шухӑшламалла. Ҫук! Ирӗккӗн ӗмӗтленсе манӑҫма та памаҫҫӗ.

**Имки.**

## Лутра кӗпер.

— Маслӑ варӗнђе кӑҫал ҫӗнӗ кӗпер турӗҫ те, теме пите лутра курӑнатха?

— Сан куҫа анђах, Семен хӑта, лутран курӑнать пуђ?

— Ҫук, Иван пиђђе, пӗтӗм халӑх лутра тунӑ пирки упкеленет.

— Мӗнле апла пулнӑ вара?

— Вӑл ҫӳлерех пулмалла пулнӑ, та, хай технӗкӗ лутра та, кӗперине те хӑйӗн „лутра“ пуҫӗнђи планпа тунӑ.

**Онекин.**

## Ҫук, ҫук, татах ҫук

Ҫӗрпӳ
Райколхоссойусӗ,
Кахалсенђен ес
Пӗртен пӗр тусӗ.
Еп санпала калаҫамха,
Санӑн питна кӗҫҫе ҫӗлемха.
Куратни?
Туйатни?
Кӗраки ҫитет те ак,
Ҫитет.
Кампанине тухмашкӑн
Вӑл ђӗнет.
Анђах есӗ туймийех
Сыпратӑн,
Колхоссене кӑтартусем
Памастӑн.
Нимӗнле план та ҫуккӑ.
Ыйӑх ђӑпти
Сапаттӑр туђккӑ.
Ситет каллех
Тырпул пухас
Кампани.
Есӗр ӗҫе тухма
Шутлани?
Ҫук, конешнӑ, ҫуккӑ.
Ку таранђђен хађ
Нимӗн те туман.
Машшинсене йусама
Тапӑҫман.
Ҫӗннисене сахал
Кӳреттӗр темшӗн.
Пођшевикла пуласран
Хӑраттӑр темӗн.
48 машшин кӳмелле *)
Пулнӑ,—
Ҫуррине ҫех есир
Пурнӑҫланӑ.
Колхоссем уйа
Тислӗк тӑкмаҫҫӗ—
Сирӗнтен темскер кӗтеҫҫӗ,
11000 тоннӑ ҫех
Кӑларнӑ.
Ирхи ҫӗртме тума
Йӑлтах маннӑ.
Колхоҫнӗксем ҫтелшђӗнӑна
Пӗлмеҫҫӗ.
Кам мӗнле, ҫавӑн пек
Ӗҫлеҫҫӗ.
Тӗлӗнтерен,
Ҫӗрпӳ райколхоссойусӗ,
Тимӗр шапалла
Утакансен тусӗ!
Сана куншӑн епӗ
„Капкӑн“ран йӗплӗ
Ҫӑмах сӗнетӗп.
Ҫӑмах ҫи-ха, ҫинипе
Тӑранӑн,
Пођшевикла хӑвӑртлӑхпа
Ӗҫе тӑрӑн.

**Малкай.**




*) Ҫӗрпӳ райколхоссойусӗн ийунӗн 5-мӗш ђислисенђи ҫветенисенђен.

# Крылов шăни

Кăмаш комсомол йаҫейкки (Патăрйел районĕ) халăх укҫа-тенкине пухас тĕлĕшпе нимĕн те ĕҫлемен. Хăй ĕҫлемен пулсан та отҫотра ĕҫлерĕмĕр тесе ҫырнă.



**Сухалакан вăкăр măйраки ҫине ларнă шăна:**—Епĕр те суха тăватпăр. .

## ҫекреттар—телефонист

Хăшпĕр райĕҫтăвком ҫекреттарĕсен телефонпа ҫветенисем парсах ĕҫ кунĕ иртет.



**Райĕҫтăвком ҫекреттарĕ:**—Ан килха, телефонпа калаҫмалла.

**Колхоҫнĕк:**—Телефонпа калаҫатăн та, манпа хăҫан калаҫăн?

**Райĕҫтăвком ҫекреттарĕ:**—Телефон лини пăсăлсан. Унҫен вăхăт ҫук.

## Апат-ҫимĕҫ пĕҫермелли кĕнеке.

(*Ĕҫ ҫинтҫв пĕрле апатланмалли столовăйсем валҫи*).

Ҫăн-ҫăнах тутлă, сĕтеклĕ, хаклă мар апат пĕҫерес текенсене, ҫаксене кашни кунах туса пыма хушатпăр.

**Сивĕллех ҫимелли апат.** Пĕрле апатланас ĕҫе ҫăрмав кӳрекен сăтăрҫăсене, йут елементсене хыҫалти ҫухинҫен йарса илсе, тапа-тапах пĕрле апатланас ĕҫе йĕркелекен вырăнсенҫен сирпĕнтерсе кăларса тăрат. Вĕсен хĕрлĕ хупписене шуратса тасат. Шапшурă пулса кайиҫҫенех силлесе тăрса, сивĕ вырăна кайса тăрат (Арханкĕлск ҫывăхĕнҫи Соловетск утравне, йе урăх ҫĕре). Пиҫсе ҫитиҫҫенех ҫав сивĕ вырăнта пĕр хускатмасăрах тытма кирлĕ (5—8 ҫул хушши).

**Вĕри апат.** Пĕрле апатланас ĕҫе йертсе пыма хушнă тĕрлĕрен оркăнсене ил. Темиҫе хутҫен шывне улăштара-улăштара тăрса, вĕсен «шăммисене» май пур таранах вирлĕн ҫуса тух. Лайăххах пăрăҫласа, лайăххах тăварласа ĕҫҫыннисен криттĕкĕ вутти ҫине ларт. Вĕреме тытăнсан,—йашки ҫине тухнă кăпăк манерлĕ кирлĕ-марлăхсене кашăкпа пухса илсе лаххана тăк. Капла тунипе те пĕрле апатланас ĕҫ ҫине хĕрӳллĕн (вĕри) пăхни палăрмасť пулсассăн, пуҫне улăштар та, каллех хăватлăрах пăрăҫпа йурварла.

**Шарик** (шаркку). Апат ҫийес текенсене ил те, «пĕрле апатланас ĕҫе» те тăвас, те тăвас мар» йатлă кăмсăкран (кăвакарни, шăрка) тасатса хур. Силле лайăххах, активнăҫ (хастарлăх) ҫĕприне йарса ларт. Вăйне (енеркине) вĕретекенех ту та, самокриттĕк кăварĕ ҫине ăшалама ларт (хĕрелиҫҫен). Вара **тутлă апат** пиҫсе ҫитет, ҫимелле те пулаť. Ҫавăн пек пĕҫерсе хатĕрленĕ апатăн тути те лайăх, сĕтекĕ те нумай, хакĕ те йӳнĕ пулаť, теҫҫĕ пирĕн пĕрле апатланас ĕҫе йĕркелекен хĕрлĕ поварсем.

**Сам—ăв.**

# Ђĕрĕ ĕҫ кирлĕ

Хăшпĕр комсомол йађейккисем вăхăта калаҫсах иртереҫҫĕ, ĕҫĕсем куранмаҫҫĕ.

— Ну, йулташсем! Еххĕм, еххĕм,—комсомол ҫекреттарĕ пырĕнђен темĕскер кăларасшăн пулса тăсарах ӳсĕркелерĕ те, калаҫма тытăнђĕ:—вуникĕ ҫынтан тăваттăшĕ килнĕ. Пурте пухăнасса кĕтсе тăрсан, епир хĕллеђђен те сопрани тăваймăпăр... Сопранийе уҫăлнă тесе шутлăпăр... Иван! Ђеретпе претҫетаттĕл йулма пайан сана тивет.

Суйланă претҫетаттĕл вырăнне ларињђенех йађейккă ҫекреттарĕ кун йĕркине калама пуҫларĕ.— Пĕрремĕшĕ—патшалăх тулашĕнђи ĕҫсем; иккĕмĕшĕ те ҫавах; виҫҫĕмĕшĕ—тĕрлĕрен. Йышăнатпăри ҫак кун йĕркине.

Кун йĕркине йышăнсан сăмах илђĕ йалти типломат—Кăштăркки Вађукĕ. Ҫак токлат ıăвас ĕҫе парăннă активиса иртнĕ ҫулсенђе Ђемперлена ҫине тăрсах вăрҫнăран „Ђемперлен тӳрри“ тесе хушамат панăђђĕ. Ђемперлен ĕҫĕсене хурла хурла ăна (Ђемперлена) вырăнтан кăларттарса ӳкерттерсен, Кăштăркки Вађукĕн токлађĕсем хĕрӳлĕхĕсене ҫухатрĕҫ. Франтсире, министăрсем астуса ĕлкĕрме ҫук, ђас улшăнаҫҫĕ, Керманинђе каллех,—савăнпа Вађук тахҫантанпах токлатсенђе уйрăм ҫынсене хăртма пăрахса, мĕн пур тĕнђери пуршуаҫийе шămми-шакки мĕнĕпех суйлаť. Пайан та несĕпсĕр пуршуйсене йатласа илђĕ, вĕсем криҫĕсран тухаймассине шантарђĕ, пĕр ик йĕплĕ сăмах ҫăварĕсене хыптарђĕ те, тарланă питне кĕпе ҫаннипе шăлса илсе, вăраммăн сывласа, сăмах пĕтрĕ, терĕ те, йерипе вырăнне ларђĕ.

Токлат пĕтсенех йађейккă ҫекреттарĕ вырăнĕнђен йерипен ҫĕкленђĕ. Ывăннă питкуҫĕ ҫине пăхсан кун ҫинђен тахҫанах илтнĕ, виҫĕмҫулах йăлăхтарнă,—тесе ҫырнине вулама пулаť.

— Пурте ăнланатăр ĕнтĕ... Аťăр пĕрмайах пренийе куҫар. Кам калаҫас тет?

Калаҫас тейекен ҫук: те пурте ăнланнă, те самокриттĕккă сарман пирки тĕнђери кăпитал ҫитменлĕхĕсене кăтартма вăтанаҫҫĕ, те прени уҫса хăйсем ним те улăштарма пулмассине сиссе, правиттĕлствă ҫине шанса тăраҫҫĕ,—пĕлместĕп мĕншĕн тĕр, анђах ҫакăн пек паҫҫивнăҫ йађейккă ҫекреттарне тарăн шухăша йађĕ. Нумайђђен ҫекреттар тарăн шухăшĕ тарăн ҫĕрте ишрĕ. Сасартăк унăн куҫĕ ҫулланса темĕскер, вырăссем каларăшне, кениаљнăй шухăш хĕлхемĕсем сирпĕте пуҫларĕҫ. Ҫавăнтах вăл тађĕ те урайне пăрҫа сапаланă пек сапала пуҫларĕ. Пайтах вăл каларĕ: кăпитала та тивмесĕр хăвармарĕ, сылтăм сулăнђăкне те айаккинђен ђышрĕ, сулахайне те ҫилхинђен туртрĕ, йулашкинђен темĕскерле пултарулăă сасăпа: епĕ ҫур сехет калаҫрăм. Высываť тăватăп хам пекех ҫур сехет калаҫма йулташ Йуманăва, тесе хуђĕ.

Мĕскĕн Йуманăва сĕтĕрсе икĕ вут хушшине кӳртсе хуђĕҫ: пĕр йенђен „высăва“ йышăнмасан комсомол йатне ҫĕртетĕн, тепĕр йенђен тем тĕрлĕ пуҫ мимине ђӳхесе пăрсан та, пĕр «тарăн» шухăш та йухса тухмасť. «Тарăн» шухăш кĕтсе тăма вăхăт ҫуккине пĕлсе, Йуманăв асне илђĕ пĕлтĕр «Ленинисăм кĕнеки» ҫинђе криҫĕссем ҫинђен вĕрентнине. Криҫĕса тымарĕнђен пăхса ҫутатса панă пулсан та, ҫур сехете пилĕк минут тултарайманнипе.

# Копператси суйлавĕ умĕн

Тĕрлĕрен таварсем пухса хатĕрлес ĕҫ Ђăваш респуплĕкĕнђи потрепкопператсинђе тӳсме ҫук йапăх пыраť („Канаш“ хаҫатран).



— Ăҫта ҫуханă ку наккас?

## Пайан-ыранах.

— Сирĕн йалсовет хăҫан ҫулсене йусама тытăнаť.

— Йалсовет претҫетаттĕлĕ райĕҫтăвкома кайнă ђухне лаши-урапи мĕнĕпех ҫырмана кĕрсе ӳксен.

**Нан.**

ҫекреттар йенне хăйусăр пăха-пăха, хăй йулташне Петĕре ҫаплах ҫур сехет калаҫма ђĕнђĕ.

Лаптăк сăмсаллă Петĕр нумай шухăшласа тăмарĕ; тӳрех вăрман ҫинђен, улăх ҫинђен—шăпђăк йурри пек тăсрĕ. Ку пĕр сехет те калаҫма хатĕр пулђĕ, анђах ним тăва пĕлмен пуху ҫур сехетрен ђарђĕ.

Ҫапла тăватă ҫынтан пĕри те калаҫмасăр йулмарĕҫ.

Ҫекреттар савăннă. Маншăн ун пекки шухăшласа кăларасси ним те мар, тесе савăннине палăртасшăн мар та, ҫапах, мĕнле каламалла, куҫлă ҫын кураť.

Халĕ ĕнтĕ ҫекреттар вирлĕ калаҫакансенђен утарнăй прикатă туса хурас тет, вĕсене тата ăмăрту йĕркипе ĕҫлеттерес тет. Прикатă туман-таха, ҫапах ĕҫсем аван пыраҫҫĕ... Калаҫаҫҫĕ...

**Елли.**




## Ҫăтакан хут.

Хут пурне те ҫăтать. Пĕр сĕтел хушшинҫе пĕрле ҫей ĕçсе ларакан арăмна:

— Арăм! тепĕр курка ҫей тултарса парха, тесе саппискă çырса панине те ҫăтать.

Çак айалта кăтартнă Вăрнарти фссфорит савăҫĕн тиректăрĕ патне хайпе пĕр пўлĕмре пекех пĕрле ĕçлесе ларакан савком претçетаттĕлĕ Никколайĕв çыру йанине те ҫăтнă хут:

*„Директору завода Тарасову.*

*По заявлению Кузьмина Ивана по закупке сено Вы конкируетесь с Раз Партии НИУ, удержя на 25 коп. за пуд сено, что является политическим преступлением с Вашей стороны в Советских предприятиях. Предупреждая об этом второй раз (в первый раз был на угле со второны Виталина) заранее, дальнейшем при повторение такого безобразия, такой безобразной отношении израсходование Государств. средства, Нами будет передан в Народный суд, под личному Вашему адресу. Примите к сведению.*

*Пред. об'един. ФЗК М. Николаев“.*

— Ăнланмалла марçке сапписки!

— Ăнланмалла мар пулсан та, йурĕха, тенĕ ĕнтĕ Никколайĕв йулташ.—Ăнланмалла марринеҫĕлхепе каласа ăнлантарма та пултаратăп. Хире-хирĕçех ларатпăрха...

## 1200 пăт çĕрулми.

„Пĕкĕ“ çырать:

„Пионер“ йалхуçалăх ертелĕ иртнĕ кĕркунне 1200 пăт çĕрулми пусă ҫавса хуҫĕ. Халĕ çĕрулмийĕ çĕрсе кайнă (пуссине сывлăш тухмалли шăтăк туманран).

Правлени ҫленĕсене пурне те çав çĕрсе кайнă çĕрулмипе тăрантарса усрамалла, тет.

Çийес çук ăна вĕсем. Тем парсан та çийес çук аплипех. Йĕплĕ çăмах хуранне йарса пĕçерсе парсан, çийĕç... Ирĕксĕрех çийĕç.

## Çын çийекен çын.

Епĕ йумахра çын çийекен çын пур тенине илтнĕҫĕ. Хăлхана кĕрсен куçа килет тенĕ пекех ман ку çынна хамăнах курмалла пулҫĕ.

Ку Йулашри (Çĕрпў р.) вĕрентекен Й. Йаккăвлĕв пулнă мĕн. Вăл ўссĕрпе йалти активисткă Е. Çтеппанăвă пўрнине ҫăмласа татсах илнĕ. Çтеппанăвă халĕ те пуҫнитсара выртать. Суха тума 100 тенкĕ парса çынна тытнă.

Хăрушă ку уҫитлĕрен, вăл пурăнсан, пурăнсан çынсене кĕлеткипех çиме пуçлĕ. Ăна „Капкăн“ăн йĕплĕ çăмаххине хыптарас пулать, вара çăварĕ ыратнипе çынсене çийеймĕ. **Урсай.**

## Утарнĕксем пурҫиха пирĕн.

Унта хут. Кунта хут. Хутсăр мĕнле пурăнан. Унта хут. Кунта хут. Хутсăр мĕнле йертсе пыран... утарнтксене. Отношени, проттоккол, отношени. Утарнĕксене·йертсе пыни ăçта? Хут çинҫе. Хуҫĕ ăçта? Акă: 49919-мĕш номĕрлĕ отношени? Утарнĕксем ăçта, миçе, камсем? Акă 49919-мĕш номĕрлĕ хут. Ăна епĕр хулари кашни месткомах йанă. Ответҫĕ килсен, калама пултаратпăр. Унта хуг, кунта хут... Йертсе пырасси хут çинҫе.

МЕСТКОМУ РКИ.

С получением сего не позднее 3 июня с. г. просьба сообщить в срочном порядке состоят-ли ударниками указанные ниже члены и кандидаты горсовета работающи (уч-ся) в учреждениях (учеб. заведениях...» (малалла ху шамаҫĕсене кăтартнă).

Секретарь горсовета

Делопроизводитель Кузьмина.

Унта хут. Кунта кут. Утарнĕксем хушшинҫе ĕç лемен Шупашкар хулин аслă советне тăвăр вырăна „Капкăн“ çак кĕтессине кĕртсе лартатпăр.

## Кам ĕçĕ-ши?

Хĕрлĕхен çырать:

Мăн Хураçка йалĕçтăвком çыруçи (Тутаркас районĕ) Туртышин А., партти кăнтитаҫĕ, çак айалта кăтартнă йулташсене, йалти кулак арăмĕсем вăрçса çисе йарасран хăтарас майпа, çакăн йышши справккă панă.

СПРАВКА.

Дано сие кр-ки Шаландаева Анна, Иванова Матрена, Петухова Ольга о том, что они членом Союза Воинствующих безбожников не являются.

Секретарь СИК'а А. Туртушин.

Хĕрарăмсем хушшинҫе тĕне хирĕç ĕçлесси унăн ĕç мар. Такам ĕçĕ ĕнтĕ? Справккă парха, Туртушин йулташ, ун çинҫен—кам ĕçĕ вăл?

## ТĔШМĔШЛĔ ПĔҪҪЕН ХУÇАЛĂХЛĂ ÇЫН



— Ой, колхосăн паранкă пит аван пулать.

— Аван çав. Колхос претçетаттĕлĕ ҫĕлхе пĕлет пулĕ çавă...

# пĕҫĕк литтераттура шкулĕ

Ҫăвашла сăмахсене тĕрĕс ҫырма вĕренсен (пуплев палли тĕрĕс лартма пĕлни кирлех мар), „Сунтал“ сан сăввусене темшĕн тиркет пулсан, хăвăн, ҫапах, паллă етем пулас килет пулсан,—кометисем, тракетисем, трамăсем ҫырма тытăн. Вĕсене ҫырма никама та ҫармаҫҫĕ.

Писсаттĕлсем вĕрентекенсене йуратсах каймасан та, епĕ тытăнакан „талантсене“ трамă конструктси ҫинҫен пĕрик сăмах каласшăн. Кунта ҫакăн пек правĕлăсене асăрхамалла.

§ 1. Ҫырас пулсан ҫыр 5 пайлă, 10 карттинăллă, пролокпа еппилăклă трамă, мĕншĕн тесен ун пек пысăк йапаласене ретаксирисем йуратарах параҫҫĕ пулмалла (арттиссем йуратмаҫҫĕ пулин те).

§ 2. Пйессăра ҫакăн пек ҫынсем тĕсленме пултараҫҫĕ: кулак (йаҫĕ пулмалла—Хăлат, Ҫăхан, Тăхтапăл)—ҫейе пысăк хырăмлă кăтартмалла, поткулаҫнĕк (йаҫĕ Йĕкĕлти, Иус, Ҫăрттан)—ҫейе, типшĕм ҫын пулмалла, унтан тата пуп кўртмелле, тĕрлĕлĕхшĕн пĕрик петҫак, претҫетаттĕл кўртме йурат.

**Асăрхамалли**: Вĕсем мĕнле ҫынсем иккенне вĕсен шухăшĕсене, ĕмĕҫĕсене ҫавăнтах тĕплĕн ҫутатса пар, мĕншĕн тесен вулакансем вуласа пĕтерсен иккĕленме пултараҫҫĕ. Паллă писсаттĕлсем йаланах ҫапла тăваҫҫĕ (пăх—Йуман).

§ 3. Трамăра пулас ĕҫсене ҫыхăнтарса йама (завязка) писсаттĕл Виктăрăвран вĕренме пулат; ҫăн малтанах стсенă ҫине тухнă „керой“ хăй пĕҫҫен йе йулташĕпе икĕ сехет хушши каласса хăйĕн сăнпитне пĕтĕмпех кăтартат, апла тумасан „тĕттĕм“ вулакансем темĕскерле те ăнланма пултараҫҫĕ.

§ 4. Трамăри тĕп тымарне те, ҫумĕнҫи туратсене те мĕн вăй ҫитнĕ таран сарма тăрăш (пуҫтарасса вулакансем пуҫтарĕҫ). „Перепетии“, „кулҫминатсионный пункт“—кун пек акăш-макăш йут сăмахсене пĕлмесен те йурат.

§ 5. Ҫырас ĕҫе ҫăмăллатас тесе, вулакансем хăйсем шухăшласа вĕҫне тухасса шанса, хăш-хăш „курăнăва“ сăмахсемпех „ремаркка“ кўртсе хумалла. Ку ĕҫе тĕплĕн вĕренес тесен Йуманăн „Укăҫҫа касси“ ремарккисене пăхса тух („Ук. касси“ стр. 81, 86 т. ыт.). Ҫапла паллă трамăсем ҫыракантан вĕренсе ремарккăсене трамăра калаҫу ҫухлех вырăн пар.

§ 6. Сăмах суйласа, пĕр-пĕрин ҫумне йакатса ҫыпăҫтарасси тĕлĕшĕнҫен ҫăваш трамартуркĕсем валҫи саккун ҫырман-ха.

§ 7. Есĕ ҫырнине вуласа етем каҫса кайса култăр тетĕн пулсан, вырăсла пĕлмен ҫăваша тĕсле. Хисеплĕ „трамат,ркĕсем“, ытти мелпе култарасси йăваррине сиссе, пĕрмайах ҫавăнпа култарасшăн тертленеҫҫĕ (Осăппăв—„Икĕ каҫҫăн пĕр шухăш“, Ҫеркей Александрăв—„Смыҫкă“).

§ 8. Етем ҫĕри сулăннине, йе ăшĕнҫе хăйпе хăй кĕрешнине тĕрĕслес килет пулсан—туй йурри йе урăх йурăсем йурлатса макăртар.

§ 9. Пĕтерес тĕлĕшĕнҫен ҫăваш траматтуркийĕ икĕ тĕрлĕ вĕҫлев пĕлет:—ура! ура! кăшкăртса, ҫăпата йурри йурлаттарса, йе пĕр-пĕр керой вилĕмĕпе.

§ 10. Ҫырса пĕтерсен йулашки хастарлă пултаруллă ĕҫ—кăсăк (интересный) псевтоним лартасси. Ку ĕҫре—„Ҫăваш хресҫенĕ“ йе «Пирĕн йал» вуласа ăшкăлса ҫивĕҫленме пултаратăн. Ҫăваш йалкорĕсем тĕрлĕ псевтоним шухăшласа кăларас тĕлĕшпе—тĕнҫери литтераттурăра пирвайхи вырăн йышăнса тăраҫҫĕ.

Ҫак правĕлăсене асăрхаса ҫырсан сан пйессу халҫи ҫăваш паллă писсаттĕлĕсем ҫырнă трамăсенҫен кайа пулмĕ, унтан тата ху та ĕмĕр сўнми мухтав илĕн. Етем хисеплени хăна ху тытма пĕлнинҫен те килет, ҫавăнпа пйессу ҫапăнсанах „тиштирмен“ ҫынпа сăмах ан вакла. «Талантлă» ҫынсем мăнкăмăллă пулаҫҫĕ.

...Криттĕксем сан трăму ҫинҫен хурласа ҫыраҫҫĕ пулсан, криттĕк Кутрйавтсăва каланă пек (Ҫтаппан В.) „ҫавнашкал комети хăна ҫырма парсан, ес тем ҫул ларсан та ҫырас ҫук, ҫыраймăн та“,—тесе мăнкăмăллăн ахăлтатса кул. Унтан сана никам та ҫыпăҫнаймĕ.

**Елли.**


МАЛАЛЛИ УЙĂХСЕНҪЕ ТЕ

„КАПКĂН“ ШУРНАЛСĂР АН ПУРĂНĂР!

Темĕн йышши хыт кукар та: «Капкăн» хаклă, илме йăвăр, теме пултараймĕ. Ара, ăна илмешкĕн кашни уйăхшăн 10-шар пус ҫеҫ тўлемеллеҫке ха.

Ҫырăнасса кашни пуштă уйрăмĕнҫех, кашни пиҫмоностсă урлах ҫырăнса илме пулат.

Пĕрре вулама вĕреннĕ шурналсăр ан йулăр!


Ответлă ретактăр **А. Ваҫҫилйĕв.**


Упол. Чувашлита № 726. Заказ № 837. Типография № 1 Чувашгиза, г. Чебоксары. Тираж 9.300 экз.

# Шăнкăртам районĕнҫе пулманши ку?



— Сирĕн Автотор йаҫейкки ма кĕперсем тумаст?
— Технĕк ҫукха халĕ, тет.

— Хăҫан килĕ вĕсен технĕкĕ?
— Хĕлле килмелле тет Сивмуҫи йатлă технĕк.